13-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр

1942 ИЮЛЬ 8 ЮНКУН 157 (6092) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Лайăх пахалăхлă силосшăн

Тăван çĕршывпа фронт ыйтнине шута илсе, партипе правительство выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстерес, çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе 1942 çулта анлă программа палăртса хучĕç. Анчах çав программăна выльăх апачĕн çирĕп никĕсне хывмасăр пурнăçа кĕртме çук.

Выльăхсем валли ытти апат хатĕрленипе пĕрлех, пирĕн республикăри колхозсен кăçалхи çул 120 пин тонна силос хывса хăвармалла. Силос пĕтĕм выльăх апачĕн балансĕнче хисеппе кăна мар, пахалăхĕпе те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Силос — выльăх-чĕрлĕхĕн сĕтеклĕ те тутă тытакан апачĕ.

Силос хывас ĕç республикăра мĕнле пынипе паха тухас майпа июлĕн 5-мĕшĕнче туса ирттернĕ радиоперекличка çак ĕçре халĕ пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартса пачĕ. Тырă вырма тухаччен пирĕн силос хывмалли плана 70 процента çити тултармалла. Анчах июлĕн 5-мĕш тĕлне республикăри колхозсем силос хывас плана 8,4 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Хăшпĕр районсем, сăмахран, Етĕрне, Октябрьски, Йĕпреç, Кувакино тата Вăрнар районĕсем силос хывма тытăнманпа пĕрех. Етĕрне районĕнче икĕ колхоз 21 тонна хывнă та, ыттисем вырăнтан та хускалман. Куславкка районĕнче, силос хывас тĕлĕшпе государство панă задание пурнăçа кĕртес пулсан, силос хывма çĕнĕрен сахалтан та 80—90 шăтăкпа траншея чавмалла. Çак пысăк ĕçе тума кунта тĕрĕссипе пуçăнман-ха. Советски районра 85 колхозран 45 колхоз, Пăрачкав районĕнче 44 колхозран 11 колхоз силос хывма тытăнман. Чкаловски районра планпа пăхнă 4.000 тоннăран 432 тонна, Первомайски районра 3.400 тоннăран — 230 тонна кăна хывнă.

Чăн та, уйрăм районсем (Çĕмĕрле, Ишлей, Комсомольски) кашни пиншер тонна е унтан кăшт ытларах хывнă, анчах çакă вĕл палăртнă виçерен нумай аякра тăрать. Уйрăм колхозсем кунĕсĕпе лайăх ĕçлени пĕтĕм ĕçе татса параймасть. Кунта кашни колхоз, кашни район хăйĕн планне тултарма кирлĕ.

Кăçал силос хывмалли курăк çитмелĕхсĕр тесе ӳпкелешмелли çук. Çак ĕçе тумалли чи лайăх вăхăт — халĕ, тырă вырма тухаччен. Анчах районсенчи çĕрĕç органĕсемпе колхоз председателĕсем çав паха вăхăтпа усă курса юласшăн тăрăшмаççĕ. Вĕсем кунпишинче силоса хакламан, вăл мĕн тери паха апат-çимĕç пулса тăнине ăнланса илмен çынсем те пур-ха.

Силос хывас ĕçе хускатса ярас тĕлĕшпе ВЛКСМ обкомĕ июнĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 15-мĕшне çитиччен комсомолецсемпе çамрăксен çирĕп кунлăхне ирттерме йышăнчĕ. Тӳрех калас пулать, малтанхи вунăкунлăхăн результачĕсем начар та çитменлĕхсĕр. Государствăн силос хывмалли планне пурнăçа кĕртессишĕн чăн-чăн кĕрешӳ пуçласа ярас вырăнне, комсомолăн чылай райкомĕсем вăхăта шавласа ирттерчĕç. Çапла, сăмахран, 700 комсомолец ытла шутланакан Октябрьски районра çак иртнĕ вунăкунлăхра 35 тонна кăна силос хывнă.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх апачĕн никĕсне хывасси, çакăнпа пĕрлех силос хатĕрлесси государство ĕçĕ пулса тăнине кашни колхозникпе колхозницăн, кашни комсомолецпа комсомолкăн ăнланса илмелле. Уйрăмах çакăншăн колхоз руководителĕсемпе бригадирсен тăрăшмалла. Обществăллă выльăх-чĕрлĕхе мĕнле паха усрассишĕн государство умĕнче вĕсем чи малтан ответ тытаççĕ.

Çĕрĕç органĕсемпе районсенчи организацисем çак ĕçе ертсе пыма тивĕçлĕ. Кабинетран телефонпа сводкăсем ыйтса мар, колхоза кайса ĕçе тĕрĕслемелле, васкатмалла, вырăнта конкретлă кăтартусем памалла.

Калас пулать, хăшпĕр çĕрте силоса ирĕшĕн кăна хываççĕ. Чĕрĕ курăка вакласа шăтăка янă чухне лайăххăн таптаса пусармаççĕ, силос шăтăкне çиелтен час-часах витмесĕр хăвараççĕ. Çумăр çăвать — шăтăка шыв тулать, силос çĕрме тытăнать. Ĕç сая ан кайтăр тесен, силоса тĕплĕн хывса хăвармалла, вара вăл чăннипех паха пулать.

Июлĕн 12-мĕшĕнче комсомол обкомĕ силос хывас тĕлĕшпе республикăри комсомолецсемпе çамрăксен воскресникне ирттерме палăртать. Воскресник чăннипех ăнăçлă ирттĕр тесе, тĕплĕн хатĕрленмелле.

Кăçалхи вăйлă курăка мĕн вăй çитнĕ таранах ытларах пухса хăварса, государствăн силос хывмалли планне ытлашшипех тултарса, обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли хĕл каçма апат-çимĕç ытлашшипех хатĕрлер, çапла майпа тăван çĕршывпа фронта ытларах аш какай, сĕт-çу, чĕртавăр парар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронежран** хĕвеланăç еннерех тата **Старый Осколран** кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнта хаярăн çапăçнă. Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пунктран тухса кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 5-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 70 танкне çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 80 автомашинине ытла, боеприпассем тиенĕ 45 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтернĕ, полевой тата зенитлă артиллерин 11 батарейине пусарса лартнă, чугунçул çинчи 2 состава çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 2 полка çити тата утлă çарăн 2 эскадронне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* *

Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта пынă хаяр çапăçусенче пирĕн танкистсем противника питех те пысăк çухатусем тӳстернĕ. Çĕрлехи пĕр çапăçура кăна вĕсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Бетюк юлташ командир пулса ертсе пыракан часть К. ялĕшĕн пынă çапăçура, гранатăсем тата çунакан япала тултарнă бутылкăсем ывăтса, артиллерирен, танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен тата минометсенчен персе, 4 кун хушшинче нимĕçсен 100 танкне ытла стройран кăларнă тата гитлеровецсене 800 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене пулăшса, Курск облаçĕнчи партизансем нимĕçсен çар эшелонне крушени тунă. 30 вагон тата паровоз çĕмĕрĕлнĕ. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн пехотлă дивизийĕ, танксемпе бронемашинăсем пулăшса пынипе, пирĕн оборонăн малти хĕррине атакăланă. Çав хаяр çапăçу кунĕпех пынă. Противник, çыннисене кăна шутласан та, 500 салтакпа офицера ытла çухатнă, унăн 7 танкпа 55 бронемашина пĕтнĕ. Тепĕр участокра нимĕç пехоти, танксем пулăшса пынипе, пирĕн чаçсене кăшт чакарма пултарнă. Пирĕн танксен подразделенийĕ наступлени тăвакан противника хирĕç контратака тунă, нимĕçсен 11 танкне, танксене хирĕç пемелли 2 тупăпне тата тăшманăн пехотине нумай пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсене вĕсем йышăннă вырăнта çирĕпленсе ларма памасăр, пирĕн боецсем ăнăçлăн контратака тунă та противника вăл йышăнса илнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Çав çапăçура гитлеровецсен 40 салтакĕпе офицерне çити вилсе тата аманса юлнă, 13 танк тата 5 оруди пĕтнĕ.

* * *

Турьевпа Квашник юлташсем командир пулса ертсе пыракан минометчиксемпе артиллеристсем нимĕçсен 2 танкне, 5 орудине, боеприпассем тиенĕ 19 лавне, автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 200 гитлеровеца яхăн вĕлернĕ.

* * *

Лыскин юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем пăшалсемпе пулеметсенчен персе çапăçу хирĕ тĕлĕнче нимĕçсен бомбардировщикне ӳкернĕ. Противникăн самолечĕн экипажне тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 88-мĕш пехотлă дивизийĕнчен тыткăна парăннă капитанпа унтер-офицер тата 18 салтак çапла каласа панă: «Нимĕç войскисем питех те пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Çапăçу хирĕнче пирĕн юлташсен виллисем купи-купипе выртаççĕ. Виллисем питĕ нумаййипе вĕсене пытарса та ĕлкĕреймеççĕ. Германи командованийĕ нимĕнле çухатусем çине те пăхса тăмасть, çапăçăва салтаксен çĕнĕ те çĕнĕ ушкăнĕсене кĕртсе-кĕртсе ярать. Салтаксем вилесем тăрăх утса пыраççĕ. Эпир хамăр пурте пĕтессе ăнланса илтĕмĕр те пăшалсене пăрахса тыткăна парăнма шут турăмăр».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенчи халăхсене пĕтерсе пыраççĕ. Чернигов хулинче гитлеровецсем июнь уйăхĕнче 300 çынна ытла персе пăрахнă, вĕсене Германие ирĕксĕр ĕçе кайма килĕшменшĕн персе вĕлернĕ. Персе вĕлернисем хушшинче хĕрарăмсемпе çамрăк ачасем нумай. Нимĕç влаçĕсем кашни кунах массăллăн ухтараççĕ, ухтарнă чухне çаратаççĕ тата вĕлереççĕ.

* * *

Гитлеровецсен питĕ хаяр террорне пăхмасăрах, Югославире ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешӳ вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Пиншер хорват партизанĕсем нимĕçсемпе итальянец оккупанчĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Партизансен отрячĕсем хуласем çине сиксе тапăнаççĕ те Итали захватчикĕсен вăл хуласенчи гарнизонĕсене пĕтерсе тăкаççĕ. Июнĕн 20-мĕш кунĕсенче партизансем итальянецсен пехотин Брод хулине каякан колоннине аркатса тăкнă, 100 оккупанта ытла вĕлернĕ.

Июлĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронежран** хĕвеланăçнерех тата **Старый Осколран** кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнсенче çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронежран хĕвеланăçнерех вырăнта пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хаярăн çапăçаççĕ, вĕсене пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пĕр участокра пирĕн часть гитлеровецсен виçĕ атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 450 виллипе тата çĕмĕрнĕ 8 танк выртса юлнă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем нимĕçсен батальонне аркатса тăкнă, 8 оруди, 6 пулемет тата йывăр минометсен батарейине пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пĕр пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсене 600 салтакпа офицера ытла вĕлернĕ.

* * *

Старый Осколран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри пĕр ансăр участокра пĕр кун хушшинчи çапăçусенче гитлеровецсене 500 салтакпа офицера çити тата 4 танк пĕтерсе тăкнă. Пирĕн чаçсем, пур йышши хĕçпăшалсенчен те персе, нимĕçсене халран яраççĕ, вĕсен техникине пĕтерсе пыраççĕ. Нимĕçсен 400 ытла танкĕ тата автоматчикĕсем халăх пурăнакан пĕр пункта атакăланă. Пирĕн артиллеристсем, усă позицисенчен персе, нимĕçсен 11 танкне пĕтерсе тăкнă тата 200 нимĕçе яхăн вĕлернĕ.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 25 танкне пĕтерсе тăкнă тата 200 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ. Гавилевский юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем, пăшалсемпе пулеметсенчен персе, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Лесовой юлташăн чаçĕнчи боецсемпе командирсем противникăн пехотине пĕр батальона çити аркатса тăкнă, нимĕçсен 2 танкне тата 4 орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Летчиксем Кунин капитан, старши лейтенант Игнатьев, кĕçĕн лейтенантсем Ворововыхпа Шкиров çĕр çинчи войскăсене хӳтĕлесе пынă чухне нимĕçсен 2 истребительне тата «Юнкерс-88» йышши 12 самолетне тĕл пулнă. Хастарлă тăватă летчик атакăна ыткăннă. Нимĕç истребителĕсем пирĕн самолетсене курсанах каялла тарнă. Вара пирĕн летчиксем противникăн юлнă самолечĕсене атакăланă, «Юнкерс-88» йышши 2 самолета персе ӳкернĕ.

* * *

Пирĕн боецсен пĕр ушкăнĕ боевой задание пурнăçланă чухне нимĕç разведкине тĕл пулнă. Çапăçу пуçланса кайнă. Пĕр гитлеровец çав ушкăнăн командирне Игнатьев юлташа пăшалган пеме хăтланнă, анчах та вăхăтра пырса çитнĕ красноармеец Шавелев гитлеровецăн пуçне прикладпа çапса çĕмĕрнĕ. Красноармеец Ершов юлташ тĕл персе нимĕç офицерне вĕлернĕ, Риткин юлташ 3 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. 10 нимĕçе вĕлерсе тата 2 салтака тыткăна илсе, пирĕн боецсем пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Противникăн танкĕ сержант Отовларнă окоп урлă каçса кайнă. Хĕюллă боец сиксе тăнă та танк çине çунтаракан бутылка ывăтнă. Нимĕç танкĕ çунса кайнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн 2 çар эшелонне крушени тунă. Крушени вăхăтĕнче 20 вагон, горючи тултарнă 4 цистерна çунса кайнă, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем 200 çын ытла вилнĕ. Тепĕр районра партизансен К. тата К. юлташсем командир пулса ертсе пыракан отрячĕсем нимĕçсен пĕр ялти гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Партизансем гитлеровецсем тăнă çуртсем çине гранатăсем ывăтнă. Çав çуртсенчен урама чупса тухнă 40 салтака пĕтерсе тăкнă.

* * *

Украинăри партизансем Сумы облаçĕн районĕсенчен пĕринче нимĕçсен Я. ялĕнчи гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Оккупантсем малтан пулеметсемпе винтовкăсенчен вăйлăн персе тăнă, унтан, партизансем вĕсене çавăрса илме тытăннине курсан, автомашинăсем çине ларнă та тарнă. Çав операцире 50 гитлеровеца вĕлернĕ, 12 гитлеровеца амантнă. Партизансем хĕçпăшалсемпе боеприпассем тытса илнĕ.

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче

Республикăри МТС-семпе колхозсенче тырпул пухса кĕме ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен

Тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, тырпул пухса кĕмелли машинăсене тата ялхуçалăх инвентарĕсене хатĕрлес ĕç чылай районсенче çителĕксĕр пулса пырать. Чылай районсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсем иртнĕ çулти ĕçсенчен хăйсене валли тивĕçлĕ выводсем туман. Иртнĕ çулта тырпул пухса кĕмелли машинăсене çителĕксĕр хатĕрленипе пула, уйрăм колхозсенче вара машинăсемпе усă курассине тӳрремĕнех хакламаннипе пула, чылай машинăсем ĕçлемесĕр тăнă, çакă ĕнтĕ уборка ĕçĕсем вăраха каясси тата пысăк тăкаксем пуласси патне илсе пынă. Уйрăм колхозсен руководителĕсем машинăсемпе усă курассине хакламаннине кăтартакан фактсем кăçалхи çураки вăхăтĕнче те палăрчĕç, ун чухне Çĕмĕрле, Красноармейски, Тăвай, Канаш районĕсенчи уйрăм колхозсенче сеялкăсем пулнă пулсан та алăпа акнă.

Тырпула пухса кĕрес ĕç кăçал çанталăк начар тăнă условисенче пулса иртет. Уборка ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттересси кăçал ялхуçалăх машинисемпе инвентарьсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа юсаса хатĕрленинчен, вĕсене мĕн май пур таранах ĕçлеттернинчен, çавăн пекех тата кĕрхи тырăсемпе çурхи тырăсене вырнă çĕрте кĕреплелĕ çавасемпе массăллăн усă курнинчен килет. Анчах чылай районсен руководителĕсем, ВКП(б) Обкомĕ ятарласах хушнă пулин те, МТС-семпе колхозсенче ялхуçалăх машинисене Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ кăтартса панă срокра юсаса пĕтерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнман. Çакă ĕнтĕ уйрăм колхозсен руководителĕсем тырпулсене пухса кĕрес ĕçе çурлапа çеç тума шутласа сиенлĕ йăла тытса пынине кăтартса парать. Çавна пула республикăри МТС-сенче комбайнсене юсас плана июлĕн 1-мĕш тĕлне 35 процент кăна пурнăçланă; Сĕнтĕр, Кувакино, Пăрачкав МТС-ĕсенче вара комбайнсемпе ытти ялхуçалăх машинисене юсас плана тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрать. Жнейкăсемпе лобогрейкăсене 46,1 процент чухлĕ çеç юсанă, Красноармейски районра вара 79 жнейкăран 19 жнейкине çеç юсанă, Пăрачкав районĕнче 153 жнейкăран 34 жнейкине, Первомайски районра 118 жнейкăран 28 жнейкине çеç юсанă. Кĕреплеллĕ çавасем хатĕрлес ĕçе начар организацилемен.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене 1942 çулти июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа 15-мĕшне çити вăхăтра МТС-семпе колхозсем тырпулсене пухса кĕме мĕнле хатĕрленнине пур çĕрте те тĕрĕслесе ирттерме хушнă, тĕрĕслӳ итогĕсене МТС работникĕсемпе колхозниксен пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла, уборкăна хатĕрленес ĕçе вĕçлемелли татăклă мерăсене йышăнмалла.

Райсоветсен исполкомĕсен председателĕсене тата ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене çапла тума хушнă: комбайнсене, МТС-семпе колхозсен жнейкисемпе лобогрейкисене пурне те хатĕрлесе çитерсе, кĕрхи тата çурхи тĕштырă культурисене пухса кĕрес ĕçре вĕсемпе пуринпе те усă курмалла тăвас пулать, çавăн пекех тата косилкăсене тырă вырмалла туса майлаштарса вĕсемпе туллин усă курас пулать. Тăккаланчăксене хирĕç кĕрешес шутпа, тырпул пухмалли машинăсем çумне зерноуловительсем туса лартас пулать.

Чылай колхозсен, партипе совет тата уйрăмах çĕрĕç органĕсен руководителĕсем тĕштырăсене çурлапа çеç пухса кĕртме шутланине ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тĕрĕс мар тесе йышăннă. ВКП(б) райкомĕсемпе райсоветсен исполкомĕсене çапла тума хушнă: колхозсенчи ялхуçалăх машинисене хатĕрленипе пĕрлех, кĕреплеллĕ çавасем те хатĕрлесе вĕсемпе тырпул пухса кĕрес ĕçре анлăн усă курмалла тăвас пулать. Çурлапа ĕçленипе танлаштарсан, кĕреплеллĕ çавасемпе усă курни ĕç тухăçлăхне 2—3 хут ӳстерет.

Тырпулсене çурлапа вырнă çĕрте тата кĕлте çыхнă çĕрте ĕçлекенсем валли Чăваш АССР Наркомземĕ тунă примерлă нормăсене, вĕсем ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшман пирки, ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пăрахăçа кăларнă. Кĕрхи тата çурхи тырăсене çавапа е çурлапа вырнă çĕрте, жнейкăсемпе вырнă хыççăн кĕлте çыхнă çĕрте ĕçлекенсен ĕç нормине кĕлтесен хисепĕ тăрăх мар, çĕр лаптăкĕ тăрăх шута илмелле тума хушса хăварнă.

ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

ЕТĔРНЕ, июлĕн 7-мĕш **(Телефонпа)**. Районри колхозниксемпе колхозницăсем нимĕç оккупанчĕсене аркатса тăкас шухăшпа пурăнаççĕ. Геройла Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшу пама тăрăшаççĕ.

Стрелецкинчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государствăна 1942 çулти обязательство шучĕпе 127 центнер тĕштырă леçсе пачĕç. Çавăн пекех Чиганарти «Парижская Коммуна» колхоз та 92 центнер, Никольскинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 27 центнер тырă леçсе панă.

А. КРАСНОВ.

* * *

ТĂВАЙ. Элыпуçĕнчи «КИМ», Нăрваш Кушкăри «Искра Ильича» колхозсем çак иртнĕ кунсенче 1942 çулти обязательство шучĕпе государствăна 100 центнер тĕштырă пачĕç. Районри ытти колхозсем те государствăна иртнĕ çулхи тырра параççĕ. Тушкильтри «Хĕрлĕ Çар» колхоз 18 центнер, Киччейри «Майăн 1-мĕш» колхоз 12 центнер тырă панă.

М. КАЧИМОВ.

Утă çулмалли машинăсемпе туллин усă кураççĕ

КӲКЕÇ. Сосновкăри «14 лет Октября» колхоз утă çулма тухрĕ. Ĕçе кашни кунах 50 колхозник тухать. Вĕсенчен нумайĕшĕ хĕрарăмсем. Колхозницăсем ĕçе пысăк хастарлăхпа туса пыраççĕ. Мария тата Клавдия Гавриловăсем, Алексеева, Кузьмина, Кимина, Епифаньева тата ытти нумай колхозницăсем утă çулнă çĕрте ĕç нормине ирттерсе тултарса пыраççĕ.

Колхозăн утă çулмалли машинăсем 4. Вĕсем пурте улăхра пĕр чарăнусăр ĕçлеççĕ.

Утă çулас ĕçе «Красный флот», «Осоавиахим», Молотов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем те тухнă.

М. СМЕТАНИН.

„Пучах" колхоз тырă вырма тухас умĕн

ÇĔРПӲ. Пысăк Чăрăш ялсоветне кĕрекен «Пучах» колхозăн тыррисем питех те лайăх çитĕнеççĕ. Ăнса пулакан тырпула кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртесси колхоз умĕнче тăракан ответлă та чыслă задача пулса тăрать.

Колхозниксен ĕçлес хастарлăхне Совет Союзĕ Великобританипе договор туни тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствипе килĕшӳ туни татах нумай хăпартрĕ. Хальхи вăхăтра колхозра хĕрӳллĕ ĕç пырать. 4-мĕш бригадăри колхозниксем тырпулсенчи çумкурăксене çумланă хыççăн çĕрулми çинчи çумкурăксене çумларĕç. 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем те çум çумлас ĕçе начар мар туса пыраççĕ.

Халĕ колхозăн бригадисем уйхирти тырпула пухса кĕртме хатĕрленеççĕ. Плотниксем Макар Андреев, Тимофей Григорьев юлташсем кĕлте кӳмелли урапасене юсаççĕ тата çĕнĕрен те тăваççĕ. Колхоз тимĕрçи çак кунсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Авăн çапас ĕçре витнĕ итем пысăк вырăн йышăннине шута илсе, колхоз çĕнĕрен витнĕ итем туса лартрĕ, çине тирпейлесе улăм витрĕ. Колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕнче тырпулсене пухса кĕртес ыйтăва тĕплĕн сӳтсе-явнă. Кашни бригада вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшса ĕçлет, тырăсене правительство кăтартнă срокра тăкаксăр пухса кĕртме, государство умĕнчи обязательствăсене срокченех пурнăçлама хатĕрленет.

Колхозниксем пухура уборка вăхăтĕнче ачасен яслине тата пĕрлешӳллĕ столовăй уçма йышăнчĕç. Яслире ĕçлеме унччченхи çулсенче ĕçленĕ çынсене уйăрса çирĕплетрĕç.

Уборка вăхăтĕнче культурăллă-массăллă ĕçе туса пырассине комсомолецсем хăйсем çине илчĕç. Çавăн пекех бригадăсенче стена хаçачĕсем кăларас ĕçе те йĕркелесе ятратпăр.

Мих. ЯКОВЛЕВ.

Люцерна, клевер çулаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, июлĕн 7-мĕш. **(Хамăр корр)**. Районри колхозсем хĕрсех люцерна тата клевер çулаççĕ. Туллимар сведенисем тăрăх, ĕнерхи куна район клеверпа люцерна çулас плана 28 процент пурнăçланă. Малта пыракан колхозсем ку ĕçе çак кунсенчех вĕçлеççĕ. Ахпӳртри Сталин ячĕпе тăракан колхоз 80 гектар çулнă, «Восток», «Маяк» колхозсем 40-шар гектар çулнă.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Калинин фрончĕ). **Укерчĕк çинче:** И. Васильев сержантăн гвардейски расчечĕ тăшман окопĕсем çине минометран перет.

В. БАШКОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Летчиксен хастарлăхĕпе ăсталăхĕ

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 6-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ)**. Совет воинĕсем хăйсен тăван çĕрĕн кашни пусăмне çирĕп те хастарлăн хӳтĕлесе, противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине куллен нумай пĕтереççĕ. Фронтăн участокĕсенчен пĕринче фашистла чаçсем питех те сайралса юлнă, çавăнпа унта фронтăн ытти участокĕсенчен вăйсем илсе пыма тивнĕ.

Халăх пурăнакан пункт хĕррине противникăн танкĕсемпе мотомеханизированнăй пехоти нумай пухăнса тăни çинчен пирĕн разведчиксем пĕлтернĕ. Чаçах сывлăшра бомбардировка тата штурм тăвакан самолетсем хăпарса кайнă. Самолетсем тăшманăн колоннисем çине кĕтмен çĕртен пырса тухнă. Пăрахнă бомбăсем танксен хурçисене таткала-таткала пăрахнă. Нимĕнрен хăраман штурмовиксем аялтан вĕçсе пырса пулеметсенчен пенĕ, гитлеровецсене çула-çула тухнă.

Çав кун летчиксем 51 танк пĕтерсе тăкнă тата çĕмĕрнĕ, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 80 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă. Фронтăн çак участокĕнче пирĕн авиаци юлашки икĕ кун хушшинче кăна тăшманăн 36 самолетне персе ӳкернĕ.

Д. ЩУКИН.

Гитлеровецсем Сорочинцăра тунă тискер ĕçсем

КАНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 6-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ)**. Çак кунсенче Полтава облаçĕнчи районсенчен ватă колхозниксен пĕр ушкăнĕ фронт линийĕ урлă каçса килнĕ. Вĕсем пурте питĕ начарланса кайнă, çĕтĕк-çатăк тумтирсем çеç тăхăннă. Нумай колхозниксен ӳчĕсем çинче вĕсене нумаях пулмасть хĕненин тата асаплантарнин йĕрĕсем пур.

— Урăх чăтса тăма çук. Пирĕн чечеклене ларакан яла нимĕçсем мĕн туса хунине курсан, тĕлĕнсе кайăр, — тет куççуль юхтарса Сорочинцы ялĕнчи колхозник Иван Андреевич Оглобля. — Миçе çынна вĕлерчĕç пуль, миçе çурта çунтарса ячĕç пуль вĕсем.

Нимĕçсем Сорочинцăра хуçаланнă малтанхи икĕ уйăхра хĕрарăмсене, старуксене тата ачасене 120 çынна ытла персе, çакса тата асаплантарса вĕлернĕ.

Вырăссен аслă писателĕн Николай Васильевич Гоголĕн таса ятне гитлеровецсем калама çук тискеррĕн мăшкăллани çинчен колхозниксем каласа панă. Сорочинцăра Гоголь çуралса хăйĕн малтанхи çулĕсене пурăнса иртгернĕ, çав вырăнта унăн пĕчĕк çурчĕ сыхланса юлнă. Унта ĕлĕкрех музей пулнă.

Фашистла пуçкасакансен ирсĕр ушкăнĕ офицерпа пĕрле çав çурта тустарса пĕтернĕ. Фашистсем унăн мĕнпур чӳречисене çĕмĕрсе пĕтернĕ, алăкĕсене кăларса илсе пăрахнă. Унтан вĕсем Гоголĕн произведенийĕсен питех те сайра тĕл пулакан изданийĕсене урама илсе тухнă та вĕсене çунтарса янă. Çавăн пекех Гоголĕн хăйĕн килти сĕтел пуканĕсене те çунтарса янă, писателĕн сыранĕсене те çунтарнă.

Çав музейра Гоголĕн тата унпа пĕр вăхăтра пурăннă писательсен, актерсен, художниксен кӳлепписене туса лартнă пулнă. Усĕр фашистсем çав скульптурăсем çине пистолетсемпе автоматсенчен пенĕ. Колхозниксем уççăнах тарăхма тытăнсассăн, фашистсем çав çурт патне пухăннă ушкăн çине виçĕ хутчен харăссăн персе янă.

З. ЛИПАВСКИЙ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕсем çумĕнче тупнă çырусенче вĕсен тăванĕсем Германирен тырă калчисем пĕтни çинчен тата тырă начар пуласси çинчен çырса пĕлтереççĕ. Нимĕç унтер-офицерне Отто Юнга çапла çыраççĕ: «...Тулăпа клевер йăлтах пĕтрĕç, ыраш пĕтсе пырать». Ефрейтора Эрвин Даммене çапла пĕлтереççĕ: «...Хĕрхи тырăсем пурте тенĕ пекех шăнса пĕтрĕç... Вылăх апачĕ çук...». Эмиль Вернер обер-ефрейтора Эдлинд Вернера çапла çырать: «Тырă кăçал начар пулать. Нумайĕшĕ юлашки çĕрулмине çисе янă ĕнтĕ. Утă та пĕтрĕ. Нумайĕшĕн клевера пăсса акма тиврĕ. Ыраша тулă калчисем питех те сайра, тырă лайăх пуласса кĕтме çук. Атте çапла калать: тырă пулмасан вăрçă чарăх пĕтет, тет».

* * *

Круппăн заводĕсенче (Германия) сывлăшран тапăнасси çинчен пĕлтерекен кашни тревога хыççăн пиншер рабочисем ĕçе юри кая юлса тухаççĕ е пĕрех те тухмаççĕ. Заводсенчен пĕринче июнь уйăхĕнче май уйăхĕнчинчен виççĕ хут ытларах прогул тунă. Акăлчан авиацийĕ Эссен çине вĕçсе пырса тапăннă хыççăн рабочисем нумайĕшĕ предприятирен тухса кайса ялсене тарнă.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту

Пĕтĕм халăх фронт валли ĕçленин пĕр кунĕ

1942 çулти июлĕн 3-мĕшĕ. Ахаль кунах. Паттăр ĕçсемпе тулнă кунсенчен пĕри. Çавăн пек кунсем пулса пыра пуçлани çулталăк ытла ĕнтĕ. Атăл çинче те, Вăтам Азире те, Уралта та, Лăпкă океан хĕрринче те, фронт çывăхĕнчи хуласенче те — пирĕн тăван çĕршывăн калама çук аслă пĕтĕм территорийĕнче çынсем 1942 çулта нимĕçсен фашистла вăйĕсене пĕтĕмпех аркатса тăкмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшас тесе хăйсен пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ.

Хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах туса парар!

Ленинградри суднăсем тăвакан [illegible] завод вăрçă пуçланнăранпа боевой карап пĕрре çеç туса кăларман. Халĕ унăн коллективĕ тата ытларах вăй хурса ĕçлет. Июлĕн 3-мĕшĕнче тимĕрçĕ цехĕнче суднăсем валли кирлĕ япаласем срокчен икĕ талăк малтан туптаса хатĕрленĕ. Тепĕр цехра лебедкăсене икĕ хут хăвăртрах туса хунă. Заводăн участокĕсенчен пĕринче çав кун çĕнĕ суднăсене пухса лартас ĕç пуçланнă. Пĕр смена хушшинче икĕ карапăн хыçалти пайĕсене пухса тăратнă, ку вăл яланхи ĕç тухăçлăхĕнчен икĕ хут ытларах пулса тăрать. Тарелкин юлташăн цехĕ боевой карапăн тĕп машинисене срокчен пухса хатĕрленĕ. Пур цехсем те çав кун пĕр талăк графикне пурнăçа кĕртнĕ.

Çав воин-хуларан темиçе пин километрта ларакан заводăн, Лавин юлташ директор пулса тăракан заводăн коллективĕ Сталинла соколсем валли боевой самолетсем хатĕрленĕ. Июлĕн 3-мĕшĕнче вăл заводăн коллективĕ яланхи пекех йĕркеллĕ, графика çирĕп тытса пырса ĕçленĕ. Самолет тăвакансем çав кун темиçешер норма тултарнă. Лихачев слесарь хăйĕн заданине 10 хут ытла тултарнă.

[illegible]

Минометсем тăвакан завод (Рубанов юлташ директор пулса тăракан завод) июлĕн 3-мĕшĕнче [illegible] туса панă. [illegible] талăкри задание 133 процент тултарнă. [illegible] 1,5 хут ытла ĕçле.

Боеприпассем тăвакан ытти предприятисем те вăл кун хăйсен планĕсене ирттерсе тултарнă.

Металлургсен стахановла ĕçĕсем

Домнăсем патĕнче, мартен кăмакисем патĕнче, прокатнăй стансем патĕнче вăл кун та ĕç хĕрсе пынă. [illegible]

Кузнецк заводĕнчи прокатчăсем — Совет Союзĕн чи лайăх прокатчисем [illegible] июлĕн 3-мĕшĕнче хăй илнĕ обязательствăна [illegible] 32 процент ытларах прокат хатĕрленĕ. [illegible] задание 10 процент ирттерсе тултарнă. [illegible] домна талăкри задание 16,2 процент, [illegible] домна — 19,1 процент ирттерсе тултарнă.

Серовски заводри домнщиксем, [illegible] Сталинла сталевар [illegible] 1,5 хут ытла шăратса панă.

«Азовсталь» стахановецĕсем те задание ирттерсе нумай металл шăратнă.

Çĕр кăмăкĕпе нефть тата ытларах кăларар!

Кузбасри «Черная гора» ятлă шахта [illegible] июлĕн 3-мĕшĕнче [illegible] талăкри плана 3,5 хут ирттерсе тултарнă. [illegible]

Мускав çывăхĕнчи Донбасра [illegible] июлĕн 3-мĕшĕнче 9,3 процент ирттерсе [illegible]

Фронтран темиçе пин километр аякра тăракан Сахалинри нефть промыслисем çав кун нефте планран ирттерсе кăларнă. Катангли нефтепромыслии талăкри графика 104 процент пурнăçланă. Охински промыслара Сластинпа Забродский тата ытти юлташсен вахтисем икшер норма ытла тултарнă.

Çав кун Баку патĕнче тинĕсре нефть кăлармалли çĕнĕ шăтăк чавса пĕтернĕ. Шторм тухнине пăхмасăр, вăл шăтăка июлĕн 3-мĕшĕнче 1.550 метр тăршшĕ труба антарнă. Питĕ йывăр условисенче ĕçлесе, бригада хăйĕн сменăри заданине ирттерсе тултарнă.

Транспорт—фронт валли

Железнодорожниксем тата тинĕссемпе юханшывсем çинчи суднăсен командисем çав кун хăйсене шеллемесĕр ĕçленĕ.

Октябрьски чугунçул çинче пахагрузсем тиенĕ поездсем хăйсем пымалли станцисене срокчен 1 сехет те 40 минута малтан çитнĕ.

Каспи тинĕсĕ çинче нумай груз тиекен «Волга» ятлă танкерăн экипажĕ шторм вăхăтĕнче хăйĕн суднине пысăкрах хăвăртлăхпа илсе пынă. Июлĕн 3-мĕшĕнче каçпа «Волга» порта кĕнĕ. Стахановецсем ăна васкаса тултарнă та, нормăран ирттерсе çĕршер тонна горючи тиенĕ карап каялла кайнă.

Çав кунах инçери Лена шывĕ çинче «10 лет Якутской АССР» ятлă пароход Якутска пысăк сулă илсе çитернĕ. Сулла вырнаçтарма 10 сехет кирлĕ пулнă, анчах пароход команди ăна сехет çурăра туса пĕтернĕ.

Çĕршывăн уйхирĕсенче

Çĕршывăн уйхирĕсенче, çĕрмамăкĕпе хĕрлĕ кăшман плантацийĕсенче, çырла сачĕсемпе виноградникĕсенче вăрçă тивĕçлĕ пысăк тухăçлăхшăн кĕрешӳ пынă.

Киргизин Чуйски улăхĕсенче июлĕн 3-мĕшĕнче тырă çулма пуçланă. Кăçал тырă нумай тухмалла. «Комышит» колхоз [illegible]

[illegible] Каскеленски районĕнчи III-мĕш Интернационал ячĕллĕ [illegible] 65 çулти М. Мухаметхан [illegible]

Карс-Тумăн [illegible] Ворошилов [illegible] (Туркмени) [illegible] Ашхабадри МТС-ран колхоза [illegible]

Çуллă тулă Памир çинче [illegible]

Грузири чей плантацийĕсенче июлĕн 3-мĕшĕнче [illegible] Узбекистанра [illegible]

* * *

Июлĕн 3-мĕшĕнче заводсемпе фабрикăсенче [illegible]

(ТАСС).

Хатĕрлев работникĕсен канашлăвĕ

Июлĕн 6-мĕшĕнче Канаш хулинче хатĕрлев организацисенчи работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва çывăхри районсенчи Заготзерно тата райпотребсоюз организацийĕсен хатĕрлев конторисен директорĕсем тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем пулчĕç.

Канашлăвăн кун йĕркинче икĕ ыйту тăчĕ: 1942 çулти çĕнĕ тырра йышăнма техникăллă база хатĕрлесси тата государствăна 1942 çулшăн аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм, тĕштырă тăратас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен. Пĕрремĕш ыйтупа канашлура Вăрнар, Йĕпреç, Канаш районĕсенчи Заготзерно пункчĕсен директорĕсем каласа пачĕç, иккĕмĕш ыйту тăрăх Калининскти, Йĕпреç, Кувакино, Комсомольски районсенчи уполномоченнăйĕсем отчет туса пачĕç.

Çĕнĕ тырра государствăн склачĕсене йышăнас вăхăт çывхарса килет пулсан та республикăри чылай районсенче тырă хумалли складсемпе элеваторсем, тарасасем, çавăн пекех тырă пахалăхне тĕпчекен лабораторисенчи инвентарьсем ĕçе хатĕр мар. Чылай районсенче вĕсене тасатас, дезинфекцилес, ремонтлас ĕç начар пулса пырать.

Вăрнар районĕнчи Заготзерно пункчĕн склачĕсенчен пĕрне çеç юсаса хатĕрлесе хунă, тепĕр икĕ склада юсама тин çеç тытăннă, ыттисем юсавсăр лараççĕ. Тарасасемпе лаборатори инвентарĕсене те çуррине яхăн çеç ремонтланă. Вăрнарти Заготзерно директорĕ Клибышев юлташ канашлура тунă отчетран районри хатĕрлев организацийĕ çĕнĕ тырра йышăнма япăх хатĕрленни уççăнах курăнчĕ. Вăрнар районĕнчи Заготзерно пункчĕн склачĕсене халĕ те юсама пуçăнман, кунта чылай складсен тăррисем юсавсăр. Клибышев юлташ складсен çиййĕсене витмелли турпаса Шăхасанпа Çĕмĕрле районĕсенчен турттарса килесси шанса ларнă. Вăрнар районĕнчех вăрман нумай пулсан та, ăна вырăнта тăвас ĕçе организацилемен.

Канашри Заготзерно пункчĕн склачĕсем те çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр мар. Юсама тивĕçлĕ складсенчен 4-шне çеç юсанă.

Тырă виçекенсемпе складсен заведующийĕсене тата лабораторинче ĕçлекенсене те уйăрса çирĕплетмен. Тырă склачĕсем умне пымалли çулсем начар. Вĕсене юсас ĕçе Буткевич юлташ организацилемен.

Заготзернон республикăри конторин управляющийĕ Минаев юлташ хăйĕн сăмахĕнче иртнĕ çул хатĕрлев организацийĕсем тунă йăнăшсем çинчен тата вăл йăнăшсене кăçал тепĕр хут тумалла марри çинчен асăрхаттарса каларĕ.

— Кăçал Заготзерно пункчĕсене пыракан тырра пĕр чăрмавсăр, хăвăрт илсе тăмалла тата йышăннă тырра лайăх упраса усрамалла пулать,—тет Минаев юлташ.

Иртнĕ çул Елчĕк районĕнче тырă илес ĕçе райуполнаркомзагра ĕçлекенсем тӳрремĕн хăйсем туса пыма тытăннă. Çав вăхăтрах Заготзерно директорĕ ку ĕçе пачах та хутшăнман. Çавна пула ĕнтĕ иртнĕ çул складсене пахамар тырă йышăнни те пулнă.

Минаев юлташ Вăрнарти, Пăрачкаври, Кувакинори, Вăрмарти тата Канашри Заготзерно пункчĕсем çĕнĕ тырра йышăнма начар хатĕрленни çинчен каларĕ. Вĕсен ĕçĕнче пуçарулăх çаххалине палăртрĕ. Вăрнарта тырă типĕтмелли сушилка тăвасси çинчен Клибышев ик-виçĕ çул хушши калаçать ĕнтĕ. Анчах ĕçĕ паянхи кун та çук.

Канашлăва Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕн заместителĕ С. К. Коротков юлташ ертсе пычĕ. Коротков юлташ хăйĕн сăмахĕнче Заготзерно пункчĕсем складсемпе сушилкăсене тата элеваторсене юсас ĕçе кая хăварса пынине сивлерĕ. Заготзерно пункчĕсен умĕнче тăракан задачăсене кăтартса пачĕ.

Кăçал хатĕрлев пункчĕсем хăйсен ĕçне нихăçанхи пек мар организованно туса пымалла. Тырă илес ĕçе пĕр чăрмавсăр туса ирттермелле. (Тырă пама пыракансен вăхăчĕ пĕр минута та сая ан кайтăр. Çавăнпа Заготзерно пункчĕсен техникăллă базине—складсемпе элеваторсене, тарасасене, лабораторисенчи тата пушара хирĕç кĕрешмелли инвентарьсене, михĕсене, брезентсене июлĕн 25-мĕш тĕлне пĕтĕмпех хатĕрлесе çитермелле. Пунктсенче учет ĕçне тивĕçлĕ вырăна çĕклемелле. Панă тырăшăн колхозсене квитанцисене çийĕнчех çырса памалла. Ку тĕлĕшпе ĕçлекен кадрсене вĕрентсе хатĕрлемелле.

Канашлура отчет тунă районсем государствăна аш-какай, çăмарта, сĕт-çу тăратас обязательствăсене çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Калинински район 1942 çулта государствăна аш-какай парас обязательствăна темиçе процент кăна пурнăçланă. Çавăн пекех сĕт-çу, çăмарта парас обязательствăсене те начар тултарса пырать. Райуполнаркомзаг Мурзуков юлташ хатĕрлев ĕçĕсене начар ертсе пырать. Партипе советăн районри тата вырăнсенчи организацийĕсем ку ĕçе конкретлăн ертсе пымаççĕ. Комсомольски районра та государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçлас ĕç начар пулса пырать. Райуполнаркомзаг Константинов юлташ колхозсенче сахал пулать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ те хатĕрлев ыйтăвĕсемпе çителĕксĕр интересленеççĕ.

Канашлу государствăна çăмарта парас ĕçре Пăрачкав, Канаш, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай районĕсем уйрăмах кая юлса пынине палăртрĕ. Çăмарта памалли срок иртсе пырать пулсан та Хĕрлĕ Чутай районĕнче чылай колхозсем ку ĕçе тума пачах та тытăнман.

Хатĕрлев организацисенче ĕçлекенсен хăйсен ĕçне тĕпренех улăштарса çĕнетмелле. Уйри тырăсене вăхăтра пухса кĕртесси, государствăна тĕштырă парасси—пысăк ĕç. Ăна тума пуренĕпе те хатĕрленсе çитмелле. Республикăри малта пыракан колхозсем государствăна тĕштырă срокченех пама тытăнни пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем кăçал нумай хут лайăхрах та хĕрӳллĕнрех ĕçлеме тытăннине кăтартса парать. Республикăри колхозсем çак иртнĕ уйăхсенче кăна государствăна срокчен 3.000 пăт тĕштырă панă. Хатĕрлев пункчĕсенче те кăçал çирĕп дисциплинăпа йĕркелĕх пулмалла. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хатĕрлев организацисен хăйсен ĕçне çӳллĕ пусăма çĕклемелле.

П. НИКОЛАЕВ.

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.).

Ĕçкунĕсене шута илсе пымаççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Татмăшри «Восток» колхозра колхозниксем ĕçлесе тунă ĕçкунĕсене вăхăтра шута илсе пымаççĕ. Çавăн пекех тата ĕçкунĕсене тĕрĕс çырса памаççĕ. Колхозăн учетчикĕпе счетоводĕ хăйсен ĕçне япăх туса пыраççĕ пулсан та, колхоз правленийĕ ку ĕç çине тивĕçлипех çавăрăнса пăхмасть.

Партипе правительство «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановлени тухсанах колхозăн бригадисенче канашлусем пулса иртрĕç. Анчах та ку постановление кашни колхозникпе колхозницăна ăнлантарса паман-ха. Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш бригадăсенче, тĕслĕхрен, хăшпĕр колхозниксем постановлени çинчен пачах пĕлмеççĕ, çавăнпа колхоз производствинче сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Ку бригадăсенче агитацилле-ăнлантарулла ĕçе туса пыма çирĕплетнĕ А. Степановăпа В. Уткина юлташсем хăйсен ĕçĕнче ответлăха туймаççĕ.

П. ГОЛОВИН.

Вырăнти удобренисене—хире

КАЛИНИНО. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнни Малти Кăкшăмри «Хĕрлĕ кавалерист» колхоз колхозникĕсене вăйлă тырпул туса илме хавхалантарчĕ. Вырăнти удобренисемпе уйхирсене çемçетни вăйлă тырпул никĕсĕ пулса тăнине ăнланса илсе, колхозниксем çак иртнĕ кунсенче уя 1.300 лав тислĕк кăларчĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах А. Степанов, Ф. Павлов колхозниксем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Çавăн пекех Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхозри колхозниксем те, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене пурнăçласа, çĕртме пуссине те 3.000 лав тислĕк кăларчĕç. 2-мĕш бригада (бригадирĕ Е. Сапожникова) тислĕк кăларас плана ытлашшипех тултарчĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Çилос хывма тытăнчĕç

ТАВАЙ. Районри колхозсем, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, силос хывмалли плана ирттерсе тултарма сăмах пачĕç.

Паянхи куна Тăрмăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз 210 тонна, Хучелти Мичурин ячĕпе тăракан колхоз 70 тонна, Амалăхри «Горьковская Коммуна» колхоз 65 тонна, Нăрваш Кушкăри «Искра Ильича» колхоз 60 тонна силос хывнă.

М. КАЧИМОВ.

СЕНТĔРВАРРИ. Вылăхсене хĕл каçарма çителĕклĕ тăран апат хатĕрлес майпа Пĕчĕк Маклашкинăри «Красная Армия» колхоз 25 тонна, Малти Чиперуйри Урицкий ячĕпе тăракан колхоз 23 тоннăна яхăн силос хывнă те ĕнтĕ. Ку колхозсем турат касса хатĕрлеççĕ. Силос хывма уйăрса хунă колхозниксем малалла та хĕрӳллĕн ĕçлесе пыраççĕ.

Ф. ИЛЬИН.

Ют çĕршывсенче

АНГЛИН ХĔРАРĂМĔСЕМ ХĔÇПĂШАЛ ТĂВАС ĔÇРЕ ХАСТАРЛĂН ĔÇЛЕÇÇĔ. Укерчĕк çинче: Хĕрарăмсен бригади «Харрикейн» йышши истребителе пухать. (Лондонран радио тăрăх панă).

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕнче Англин çĕр çинчи çарĕ сывлăшри вăйĕсем противника кунĕпе атакăланă. Пĕр участокра Англи войскисем, çĕрле атака туса, противника çирĕплетнĕ пунктран хĕссе кăларнă, противник пысăк çухатусем тӳснĕ. Англичансен çухатăвĕсем пысăк мар. Англи истребителĕсем противникăн 6 самолетне персе ӳкернĕ, нумай самолетне сиенленĕ. Эл-Даба районĕнче самолетсем лармалли площадкăсем çине темиçе хутчен ăнăçлăн тапăннă. Çав площадкăсем çинче тăшманăн 14 самолетне пĕтернĕ. Англин 6 самолечĕ хăйсен базине таврăнман.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 4-мĕшĕнче Англин бомбардировкă тăвакан авиацийĕ июлĕн 4-мĕшĕнче противник оборонин малти хĕрри çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пурте тĕл пырса ӳкнĕ. Июлĕн 4-мĕшĕнче палăртнă тăрăх, противник пуринчен ытла Итали самолечĕсемпе усă курать.

Англин йывăр бомбардировщикĕсем тинĕс-çар авиацийĕпе пĕрле Эль-Аламейнран кăнтăртарахри районра противникăн лагерĕ çине вĕçсе пырса тапăннă, çав лагерьте 3.500 автомашина пулнă.

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 5-мĕшĕнче Египетра çапăçусем çав районрах — Эль-Аламейнран кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнта пулса пынă. Противник Александрия хулине тата Нилăн улăхĕсене тӳрех тапăнас хăрушлăха сирсе янă. Эль-Аламейнран 25 километр кăнтăр-хĕвеланăçнерехри районра Роммель çарĕнчи танксен ушкăнĕсем нумай вăйсăрланнă.

Нимĕçсем хăйсен наступленийĕ чарăнса тăни «Эль-Аламейн çывăхĕнчи çирĕплетнĕ вырăнсен системи» пирки пулнă тесе ăнлантарса пама хăтланаççĕ.

Роммель çарĕн çыхăну линийĕсем питĕ вăрăмланса кайнине палăртаççĕ. Бенгазирен вăл 1.100 километрта, Триполирен 1.600 километртан та аякка-рах тăрать.

Алеут утравĕсем патĕнче Японин çар карапĕсене торпеда ярса путарни

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Америкăн подводнăй лодкисем июлĕн 4-мĕшĕнче Алеут утравĕсем патĕнче Японин 4 эсминецне торпедăланă. Икĕ эсминец путнă, виççĕмĕшĕ çинче, Кыска утравĕ патĕнче тăнăскер çинче, вăйлă пушар тухнă. Тăваттăмĕш эсминецне Агатту утравĕ патĕнче тупса путарнă.

Албанири партизансем Итали войскисене хирĕç çапăçни

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Албани партизанĕсем Албанипе Югослави чикки районĕнче 4.000 итальянеца пĕтерсе тăкнă. Итали влаçĕсем пĕтĕм Албанире осаднăй положени туса хунă. Нумай заложник тытса хупнă. Анчах та оккупантсем ӳссе пыракан пăлхавсене пĕтерме пултараймаççĕ. Тиранра тухса тăракан «Томори» хаçат халăх пăлхавĕсене тата партизансен отрячĕсене пĕтерме çĕнĕ войскăсем ярса пама ыйтать.

Франциири пысăк заводра пушар тухнă

ЛОНДОН, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Виширен пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 3-мĕшĕнче ирхине Париж çывăхĕнчи Боней-Сюр-Марнри пĕр пысăк заводра пушар тухнă. Темиçе цех çунса кайнă. Моторсем, автомобильсем, трансформаторсем тата завод туса кăларакан ытти продукцисем нумай пĕтнĕ. Темиçе миллион франклăх убытка пулнă. Тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, пушар вут тĕртнипе пулнă.

Нимĕçсем бельгиецсен мĕнпур офицерĕсемпе унтер-офицерĕсене куçса çӳреме чарса лартнă

ЖЕНЕВА, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). «Нейе Цюрхер Цейтунг» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германин Бельгири влаçĕсем мĕнпур бельгиец летчикĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма тата çĕршывран тухса кайма чарса лартнă. Тата çавăн пекех Германия Бельгие тапăниччен Бельги çарĕнче тăнă мĕнпур бельгиец офицерĕсемпе унтер-офицерĕсене пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма тата çĕршывран тухса кайма чарса лартнă. Запасра тăракан бельгиец офицерĕсем кун сиктерсе полицие пырса çырăнмалла.

Италире фашизма хирĕç кĕрешекенсене суд туни

ЖЕНЕВА, июлĕн 6-мĕш. (ТАСС). Италире тухакан хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, июнĕн 25-мĕшĕнче Римра фашизма хирĕç алла хĕçпăшал тытса çапăçнă тесе айăплакан çынсене суд тума тытăннă. Айăпланакансем пурте Триест, Горицция, Фиуме тата Любляна хулисенчи çынсем. Çав ушкăна чи юлашкинчен итальянецсен пĕр отрядне тапăннă. Вăл тытăçура итальянецсен 11 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ тата амантнă. Çак ĕçпе айăпласа пурĕ 21 çынна суд тумалла пулнă, анчах та вĕсенчен улттăшĕ тарса хăтăлнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ГОСЗВЕРИНЕЦ
(рядом с кино)
ОТКРЫТ ЕЖЕДНЕВНО
с 9 час. утра до 9 час. веч.
Демонстрируются звери и птицы разных стран света.
Кормление в 7 час. вечера.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
требуются на постоянную работу: автомеханик, шофер, тракторист, конюх, грузчики на автомашины (3), грузчики на берегу Волги (5).
С предложением обращаться: гор. Чебоксары, Чувашская улица, ликеро-водочный завод.
3—2

РАЗЫСКИВАЕМ ЛОШАДЬ.
С подножного корма в районе оврага реки Кайбулки сбежала кобыла жеребая, темно-гнедой масти, грива подстриженная, год рождения 1927, рост 143 см.
Знающих местонахождение просьба сообщить по адресу: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, дом № 25, Промышленный Банк.
Будет выдано вознаграждение.
3—1

БАТЫРЕВСКИЙ (БЫВШИЙ ЦИВИЛЬСКИЙ) СЕЛЬСКО-ХОЗЯЙСТВЕННЫЙ ТЕХНИКУМ
объявляет прием учащихся на I, II и III курсы на 1942—43 учеб. год.
В техникум принимаются граждане СССР в возрасте от 15 до 35 лет, имеющие подготовку не ниже 7 классов средней и неполной средней школы.
Прием заявлений о зачислении в техникум производится до 20 августа. Заявления подаются на имя директора техникума с приложением:
1) свидетельства об образовании,
2) справки о состоянии здоровья и
3) метрической выписки о рождении.
Окончившие в 1942—43 г.г. 7 классов неполной средней школы, 8, 9 и 10 классы средней школы, а также лица, демобилизованные из рядов РККА и имеющие подготовку не ниже 7 классов НСШ, независимо от времени ее окончания, в техникум принимаются без испытания.
Все остальные поступающие подвергаются приемным испытаниям: по Конституции СССР, русскому и чувашскому языку и литературе, математике и физике.
Приемные испытания проводятся с 25-го по 30-ое августа.
Начало занятий 1 сентября с. г.
Отличники учебы зачисляются на стипендию.
Окончившие 10 классов средней школы и выдержавшие испытания по специальным предметам (общее земледелие, механизация, ботаника), принимаются на 2-й курс.
Учащиеся, ранее выбывшие из техникума, или из других родственных техникумов, принимаются на соответствующий курс.
Адрес: с. Батырево, Чкаловского района, ЧАССР, Красная площадь, Сельхозтехникум.
ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — —31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 873 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64